Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

70 (7601) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи сентябрĕн (авăн) 17-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

Ялсене çити автоçулсем тăвасси вĕçленсе пырать

Тунти кун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров Правительство членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Ларăва хутшăннисем 2008 çулхи авăнăн 14-мĕшĕнче Пермь хулинче авиакатастрофăра вилнисене асăнса пĕр минут шăп тăнă. Çак хурлăхлă пулăм Чăваш Ене те пырса тивнĕ. «Александр Иванович Трофимовăн – самăрăксене ӳт-пӳ тата ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен воспитани парас енĕпе çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ миссие тивĕçлипе пурнăçланă, республикăн общество пурнăçне хастар хутшăннă вăйлă та илемлĕ çыннăн – пурнăçĕ татăлчĕ»,– тенĕ Президент. Чăваш Республикин виççĕмĕш тата тăваттăмĕш суйлавсенчи Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Социаллă политика, сывлăх сыхлавĕ, физкультурăпа спорт енĕпе ĕçлекен комитет председателĕн çумĕ, Патшалăх строительствин тата вырăнти хăй тытăмлăх енĕпе ĕçлекен комитет членĕ, самбо енĕпе тĕнче класлă СССР спорт мастерĕ, кĕрешӳ енĕпе СССР спорт мастерĕ Александр Трофимов Чăваш Енри спорта аталантарассишĕн ырми-канми тăрăшнă, федерацин Атăлçи округĕн дзюдо федерацийĕн президенчĕ, Пĕтĕм Раççейри дзюдо федерацийĕн вице-президенчĕ пулнă.

Ларăвăн тĕп темисем уй-хирти ĕççене вĕçлессипе тата республикăри ялсене çыхăнтаракан автоçулсене тăвас енĕпе палăртнă программăсене пурнăçлассипе çыхăннă ыйтусем пулнă. Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – хула тăвас ĕç тата общество инфратытăмĕн аталанăвĕн министрĕ Александр Гончаров пĕлтернĕ тăрăх, паян Чăваш Енри 486 ял-поселокран 347-шне автомобиль çулĕсемпе çыхăнтарнă. Кăçал 200 километр çул туса хута янă.

Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев Комсомольски районĕнчи хуçалăхсем пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене пĕтĕмпех пухса кĕртни çинчен пĕлтернĕ. Тавар туса кăларакан ытти хуçалăх та малта пыраканран тĕслĕх илет. Уй-хир ĕçченĕсем çĕр улми пухса кĕртессине те вĕçлесе пыраççĕ.

Сывлăх хуралĕнче

Чĕрĕк ĕмĕр водительте

Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Ю.В. Степанов водитель Муркашри тĕп больницăн васкавлă пулăшу уйрăмĕнче 25 çула яхăн вăй хурать. Ответлăха туйса ĕçленипе, хăйĕн ĕçне пысăк тимлĕх уйăрнипе ĕçтешĕсем хушшинче палăрса тăрать. Шанчăклă водитель пулнишĕн ăна васкавлă пулăшăвăн медицина ĕçченĕсем те хисеплеççĕ.

Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.

Çĕр улми уйĕсенче

Тăрăшса ĕçлерĕмĕр

Çумăрчченхи ăшă кунсенче районти хуçалăхсем çĕр улми кăларас ĕçе пуçланăччĕ. Анчах çанталăк чăрмантарчĕ. Иккĕмĕш çăкăра пухассипе вĕсене шкул ачисем кашни çулах пысăк пулăшу кӳреççĕ. Кăçал та çак кĕске вăхăтра çĕр улми уйĕсенче вĕренекенсем вăй хучĕç.

Чуманкассинчи вăтам шкул администрацийĕ «Ударник» тата Ильич яч. хис. хуçалăхсемпе килĕшӳсем пĕрремĕш çул кăна тумасть. Тăватă кун хушшинчех шкул ачисем палăрмаллах пулăшу пама пултарчĕç. Хуçалăхсен уйĕсенчен 115 тонна яхăн çĕр улми пухса кĕртме ĕлкĕрчĕç.

О. ПАВЛОВА,
Чуманкассинчи вăтам шкул.

Цифрăсен чĕлхипе

Вăтам ĕç укçи

Росстат пĕлтернĕ тăрăх кăçалхи пĕрремĕш çур çулта ĕç укçи 18 процентран ытларах ӳснĕ регионсен хушшине Чăваш Республики тата Саратов облаçĕ кĕнĕ.

Чăваш Республикинчи вăтам ĕç укçи, Чăвашстат пĕлтернипе, январь-июль уйăхĕсенче 11022 тенкĕпе танлашнă. Пĕлтĕрхи çак тапхăрпа танлаштарсан, ку кăтарту 37, 5 процент пысăкрах.

Июль уйăхне уйрăм илес пулсан республикăри вăтам ĕç укçин кăтартăвĕ 12124-па танлашнă. Танлаштарса пăхма: Ульяновск облаçĕнче – 10990,6 тенкĕ, Киров облаçĕнче – 11388,1, Пенза облаçĕнче – 12046,6, Çармăс Республикинче – 11187,4, Мордва Республикинче – 11056,3 тенкĕ.

Пĕрлехи информаци кунĕ

Ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ

Паян районта пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Унăн теми – вырма ĕçĕсем мĕнле пыни, 2008 çулхи октябрĕн 12-мĕшне палăртнă Чăваш Республикинчи вырăнти самоуправлени органĕсен хушма суйлавне ирттересси, çулсем çинчи хăрушăрлăха тивĕçтерессипе ĕç тăвакан влаçпа вырăнти самоуправлени органĕсем умĕнче тăракан задачăсем, ĕç пенсийĕн пухăнакан пайĕ çине хушма страховани взносĕсем хывасси, пухăнакан пенсисене патшалăх енчен пулăшса тăрасси, хаçат-журнал çырăнтарассин кампанийĕ çинчен.

Виçĕ ушкăнтан пĕрремĕш ушкăна район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пырать. Унăн шутĕнче çавăн пекех Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министрĕ Р.М. Лизакова, республикăри «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ А.П. Леонтьев, Чăваш Республикин «Фармация» патшалăх унитарлă предприятийĕн генеральнăй директорĕ В.Н. Филимонов, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева.

Вĕсем Муркаш почтамтĕнче, Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче, Ваçкассинчи Культура çуртĕнче, Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче, Ильич яч. хис. хуçалăхра пулаççĕ.

Иккĕмĕш ушкăна район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ В.К. Ананьев ертсе пырать. Ку ушкăнра çавăн пекех ЧР юстици министрĕн çумĕ М.А. Кузьмин, ветеринарипе санитари надзорĕн Федераллă службин управленийĕн Чăваш Республики тăрăх ертӳçи И.Е. Дмитриев, вылăхсен чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин пуçлăхĕ Н.С. Яковлев. Вĕсем Турай ял тăрăхĕнче, Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра пулаççĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В.Г. Никитин ертсе пыракан ушкăн Муркашри тата Мăн Çĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсенче пулать. Ку шутра «Чувашрегионгаз» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн генеральнăй директорĕ К.С. Мифтахутдинов та пур.

ХАМĂР ИНФ.

Культура ыйтăвĕсемпе

Тавралăха лайăхрах пĕлес пулать

«Тĕнчене пĕлес пулсан хăвăн тавралăхна пĕлес пулать». Çак ятпа Муркашри историпе краеведени музейĕ республикăри «Музей – пĕр пек маррисен пĕрлĕхĕ» пĕрремĕш фестивальте вĕрентӳ программин проектне тăратнă. Программа «Наукăран шкул таран – музей урлă» номинаципе иртнĕ, диплома тивĕçнĕ. Кунта тăван тавралăх историйĕпе тата культурипе çыхăннă лекципе экскурси материалĕсемпе паллашма, кунта мĕнле конкурссем ирттерессине, мĕнле клубсем ĕçленине пĕлме май пур. Фестиваль вăхăтĕнче республикăри муниципаллă музейсен «Пукане – наци тетти» пысăках мар экспозици йĕркеленĕ.

Райадминистрацире

Ĕçре хастар пулнăшăн

Пĕтĕм Раççейри «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») политика партийĕн Муркаш районĕнчи вырăнти политика канашĕн, «Чувашсетьгаз» уçă акционер обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ тата Муркаш район сучĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотисемпе наградăлама йышăннă:

1. Районти газ промышленноçĕнче тăрăшса ĕçленĕшĕн тата ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн:

– **Григорий Андреевич ВАСИЛЬЕВА**, «Чувашсетьгаз» уçă акционер обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн çĕр айĕнчи пăрăхсене сыхлас енĕпе ĕçлекен службин водительне;

– **Юрий Варсонофьевич СТЕПАНОВА**, «Чувашсетьгаз» уçă акционер обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн çĕр айĕнчи пăрăхсене сыхлас енĕпе ĕçлекен монтерне.

2. Вырăнти самоуправлени органĕсенче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăпа политика пурнăçне хастар хутшăннăшăн – **Алевтина Фирсовна КОРНЕЕВАНА**, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») партин Муркаш районĕнчи ĕçтăвкомĕн ертӳçине.

3. Нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Геннадий Борисович ВЯЗОВА**, Муркаш район сучĕн хуралçине.

Ватă çынсен кунне хатĕрленнĕ май

Шкулсем те айккинче юлмаççĕ

Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта октябрĕн 1-мĕшĕнче вăрçăпа ĕç ветеранĕсемпе, педагогсемпе тата пенсионерсемпе тĕл пулусем йĕркелеме пăхнă. Сентябрĕн 20–29-мĕшĕсенче шкул ачисем пĕччен пурăнакан ватă çынсене пахча çимĕç пухса кĕртме пулăшаççĕ. Ватă çынсен кунĕ ячĕпе вара шкулта уяв концерчĕн программине хатĕрлеççĕ. Пур классенче те «Манăн çемье» тата «Манăн йăх» ятсемпе класс сехечĕсене ирттерме пăхнă.

Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта сентябрĕн 29–30-мĕшĕсенче «Ветерансем валли – парне» акци иртет. Сентябрĕн 22-мĕшĕнчен тытăнса октябрĕн 3-мĕшĕччен пур классенче те «Ал тупанĕсене ăшăтар, пĕркеленчĕксене якатар» ятпа класс сехечĕсем иртмелле. Сентябрĕн 22-мĕшĕнче шкул библиотекинче «Тăван çĕрĕн историллĕ пĕлтерĕшне асра тытар» ятпа ăрусен тĕл пулăвĕ пулать. Сентябрĕн 30-мĕшĕнче район музейĕнче пултарулăх конкурсĕ пулĕ. Сентябрĕн 20-мĕшĕнчен тытăнса октябрĕн 3-мĕшĕччен «Тимлĕх» операци-акци иртет. Вăл пĕччен пурăнакан ветерансене шефла пулăшу парассипе çыхăннă. Октябрĕн 3-мĕшĕнче шкулăн актовăй залĕнче Ватă çынсен пĕтĕм тĕнчери кунне халалласа уяв концерчĕ пулать.

ХАМĂР ИНФ.

Юбилей

Саламлатпăр

Юратнă мăшăра, кăмăллă аттене, хаклă кукаçие – Юнкă ялĕнче пурăнакан **Валерий Филиппович ИШТУДОВА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чĕререн саламлатпăр.



Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр. Ырă кăмăл, чун ăшши, çирĕп вăй-хăват, пуçарулăх нихăçан та ан иксĕлтĕр санран.

Вăрăм ĕмĕр пултăр санăн пурнăçра!
Савнă мăшăр кулли çиçтĕр сан çумра!
Ачусем хисеплĕн пăхчăр сан çине!
Мăнуксем чупса çӳреччĕр санăн çумăнта!

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, 3 мăнукĕ, тăванĕсем.

Юратнă тата хаклăран та хаклă аннене, асаннене, кукамая – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Надежда Васильевна КАЗАКОВАНА** авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнче 80 çул тултарнă ятпа хĕрӳллĕн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, çемьере ăнлану, килĕшӳпе тулăх пурнăç сунатпăр. Эс пуррипе савăнатпăр тата мухтанатпăр.

Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе хĕрĕ, кинĕсем, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем тата ял-йыш.

Çырăнтару – 2009

Çитес çул валли çырăнтараççĕ

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2009 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.

Хаклă вулаканăм, район хыпарçисĕр ан юлăр. Çитес çул та пĕрле пулар!

Райхаçат редакцийĕ.